[illegible] çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
НОЯБРЬ
27
ЭРНЕКУН
276 (6211) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Юлашки сехетре

Пирĕн войскăсем Сталинград патĕнче малалла наступлени туса пыраççĕ

Ноябрĕн 26-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Сталинград хули районĕнче, противник хирĕç тăнине сирсе пырса, малтанхи еннеллех наступлени туса пынă. Фронтăн çурçĕр-хĕвеланăç участокĕнче пирĕн войскăсем КРАСНОЕ СЕЛО тата ГЕНЕРАЛОВ ятлă халăх пурăнакан пунктсене йышăннă. Дон шывĕ кукăрĕлнĕ вырăнта пирĕн войскăсем КАЛАЧКИН, ПЕРЕПОЛЬНЫЙ, ВЕРХНИЙ ГЕРАСИМОВ, НИЖНИЙ ГЕРАСИМОВ, ВЕРХНИЙ АКАТОВ ятлă халăх пурăнакан пунктсене тытса илнĕ, çак участокра противник чаçĕсен юлашкисене Дон шывĕн хĕвелтухăç çыранне сирсе ывăтнă. Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем ЯГОДНЫЙ, СКЛЯРОВ, ЛЯПИЧЕВ, НИЖНЕКУМСКИЙ, ГРОМОСЛАВКА, ГЕНЕРАЛОВСКИЙ, ДАРГАНОВ ятлă халăх пурăнакан пунктсене тытса илнĕ.

Сталинградран кăнтăр енче противникăн икĕ пехотнăй дивизийĕ тунă контратакăсене ăнăçлăн сирсе янă, çав икĕ дивизи кăнтăр-хĕвеланăç еннелле шăтарса тухма хăтланнă. Противник пысăк çухатусем тӳснĕ.

Ноябрĕн 26-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле тыткăна илнисен хисепĕ татах 12 пин çын чухлĕ ӳснĕ. Ноябрĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа 26-мĕшне çити вăхăтра пулнă çапăçусенче пирĕн войскăсем пĕтĕмпе противникăн 63 пин салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Ноябрĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа 26-мĕшне çити вăхăтра пулнă çапăçусенче пирĕн войскăсем тĕрлĕ калибрлă 1.863 оруди, 3.851 пулемет, 50 пине яхăн винтовка, юсавлă тата юсавлă мар танксем— 1.320, лашасем 9 пине яхăн тытса илнĕ. Çавăн пекех тата çар пурлăхĕсен, боеприпассемпе продовольствин 108 складне тытса илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Колхозлă ялăн ертсе пыракан кадрĕсене куллен çитĕнтерсе пымалла

Сталин юлташ социализмлă ялхуçалăхĕ умне лартнă задачăсене пурнăçа кĕртес ĕçре—тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çар валли ытлăн-çитлĕнех тырпул, ашкакай, пахча-çимĕç, промышленность валли чĕртавар парса тăрас ĕçре чи малтанах ялсоветсемпе колхозсен руководителĕсем пысăк вăй пулса тăраççĕ. Вĕсем колхозниксене организацилеме тата мобилизацилеме пултарнинчен ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсен ăнăçлăхĕ килсе тăрать.

Халĕ ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсене хĕрарăмсемпе çамрăксен вăйĕпе пурнăça кĕртме тивет. Колхоз производствине ертсе пырасси йывăрланчĕ. Колхозсене ертсе пырас ĕçе çĕнĕрен хутшăннă юлташсен организаторла пултарулăх, организаторла опыт çителĕксĕртерех. Çавăнпа партипе совет организацийĕсем умне колхозсемпе ялсовет исполкомĕсен председателĕсене ĕçе уйăрса лартас, вĕсене ĕçлеме вĕрентес, пулăшу парас ыйту çивĕччĕн тухса тăчĕ.

Ялсовет исполкомĕсемпе колхозсен вăрçă кунĕсенче ĕçлеме пуçланă председателĕсем, пĕтĕмĕшпе илсен, хăйсен обязанноçĕсене начар мар пурнăçа кĕртеççĕ. Вăрçă кунĕ йывăрлăхсене хăюллăн сирсе, вĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн ертсе пыраççĕ. Пирĕн çĕршер колхозсемпе вуншар машинно-тракторнăй станцисем ялхуçалăх ĕçĕсенче мала тухса палăрчĕç, республикăри Хисеп хăми çине кĕме тивĕçлĕ пулчĕç. Чăваш республики кăçал вырлăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата тракторсемпе комбайнсен паркĕпе усă курас тĕлĕшпе паха çитĕнӳсем турĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухрĕ, Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăма тивĕç илчĕ. Республика çураки тăвас, тырă вырас тата кĕрхи тырăсене акас ĕçсене хăвăрт вĕçлерĕ, анчах авăн çапас, государство умĕнчи парăмсене татас ĕçре чылай кая юлчĕ. Çавăнпа эпир Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура тырпулсене пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес енĕпе мала тухаймарăмăр.

Юлса пыракан районсен руководителĕсем ялхуçалăх ĕçĕсенчи чăрмавсене чи малтанах колхозсемпе ялсовет исполкомĕсен председателĕсем час-часах улшăнса тăнипе, вĕсенчен хăш-пĕрисем ӳрĕк-сӳрĕк ĕçленипе ăнлантарса пама пăхаççĕ. Çав вăхăтрах колхоз кадрĕсене çирĕплетес тĕлĕшпе хăйсем çителĕклĕ ĕçленине аса илмеççĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнче, сăмахран, ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1942 çулти февралĕн 11-мĕшĕнче «Колхоз кадрĕсене тупса лартасси тата вĕсене вĕрентсе çитĕнтересси çинчен» йышăннă постановленине пăсса, хăшпĕр колхоз председателĕсене ВКП(б) Обкомĕпе килĕшмесĕрех ĕçе лартнă. Çавна пула унта колхозсене ертсе пырас ĕçе пултарусăр та пуçарусăр, колхоз производствишĕн мар, хăйсемшĕн ытларах тăрăшакан çынсем лекнĕ, кайран вĕсене ĕçрен хăтармалла пулнă.

Колхоз кадрĕсене суйласа илес, вĕсене пулăшса, вĕрентсе пырас ĕçе начар туса пынă пирки «пирĕн хăш чухне çапла пулать: ларать çын руководствăра, ун çинчен—ни пулă, ни какай тесе калаçаççĕ. Çавнашкал çыннăн ĕçре хастарлăхĕ те, чунĕ те çук. Унăн пĕр тивĕçлĕх кăна—вăл сулланнă çын» (Калинин). Çавнашкал «руководительсем» вырăнне халĕ хĕрарăмсене, çамрăксене хюллăнрах лартмалла. Ку тĕлĕшпе Елчĕк районĕнче тĕрĕс тăваççĕ. Унта отечественнăй аслă вăрçăн 16 уйăхĕ хушшинче ертсе пырас ĕçе 788 хĕрарăма лартнă. ВКП(б) райкомĕн кадрсен отделĕ колхоз кадрĕсене суйласа илес тата вĕсене вĕрентсе çитĕнтерес ĕçе начар мар йĕркеленĕ темелле.

Колхоз председателĕ халĕ ялхуçалăх ĕçĕсене ертсе пыракан çын çеç мар, вăл ялăн политикăллă руководителĕ те пулса тăрать. Çакна шута илсе, ВКП(б) Елчĕк райкомĕ çамрăк кадрсен политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстересси çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхнă. Ялсенче ертсе пырас çĕрте ĕçлекенсене валли парти историне вĕрентмелли, Совет Союзĕнчи тата тĕнчери лару-тăрупа паллаштармалли кружоксем организациленĕ. Кăçал кашни колхозрах 12—14 хут лекцисемпе докладсем ирттернĕ.

Кадрсене вĕрентсе çитĕнтерес ĕçе пĕр чарăнмасăр туса пымалла. Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленипе пĕр вăхăтрах колхоз кадрĕсене хатĕрлеме тытăнмалла. Ку тĕлĕшпе ВКП(б) Вăрнар райкомĕ лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Унта халĕ бригадирсем хатĕрлемелли икĕ эрнелĕх курссем организацилеме палăртнă. Вăл курссене ялхуçалăх ĕçĕсенче мала тухса палăрнă çамрăксене, пуринчен ытла хĕрачасене пухаççĕ. Занятисене ВКП(б) райкомĕн секретарĕ С. Коротков, профессор Пельцих тата районри опытлă агрономсем ирттереççĕ.

Вăрнарсен паха пуçарăвне йышăнса илсе, колхоз кадрĕсене хатĕрлес ĕçе республикăри пур районсенче те халех пуçăнмалла.

ВКП(б) Обкомĕ нумай пулмасть колхозсен председателĕсене уйăхра икĕ кун хушши пухса вĕрентмелли çинчен постановлени йышăннă. ВКП(б) райкомĕсен çак постановление пурнăça кĕртмелли мерăсене палăртса халех ĕçе тытăнмалла.

Колхозсенче ĕç мĕнле пынишĕн те, ĕçĕн пахалăхĕшĕн те ялсовет исполкомĕсен председателĕсем ответ тытма тивĕçлĕ. ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен, колхоз кадрĕсене çирĕплетнипе пĕрлех, ялсоветсене ертсе пыракан кадрсем хушшинче ĕçлессине те вăйлатмалла.

Партин XVIII съездĕнче тунă докладра Сталин юлташ кадрсене мĕнле суйласа илсе вырнаçтарса тухмаллине, вĕсене мĕнле вĕрентсе пымаллине çавтери лайăх кăтартса панă. Вăл çапла каланă:

«Кадрсене тĕрĕс суйласа илесси вăл çакна пĕлтерет:

Пĕрремĕшĕнчен, партипе правительствăн ытттăн фончĕ пулса тăракан кадрсене хака хумалла, вĕсене упраса усрамалла, вĕсене хисеплемелле.

Иккĕмĕшĕнчен, кадрсене пĕлмелле, кашни кадровăй работникĕн лайăх енĕсене тата çитменлĕхĕсене тĕплĕн сăнаса вĕренмелле, работникăн пултарулăхĕ мĕнле вырăнта çăмăлтараххăн саралса кайма пултарассине пĕлмелле.

Виççĕмĕшĕнчен, кадрсене тăрăшса ӳстермелле, ӳсекен кашни работникех çӳлерех хăпарма пулăшмалла, çавăн пек работниксемпе чăтăмлăн «аппаланма» тата вĕсем ӳсессине васкатма вăхăта шеллемелле мар.»

Сталин юлташ кадрсене суйласа илес, вĕсене тĕрĕс вырнаçтарса тухас тата воспитани парас ĕçĕн пĕлтерĕшĕ çинчен тĕплĕн кăтартса панисене халĕ, вăрçăн йывăр кунĕсенче, пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пымалла. Ялхуçалăхĕнче ертсе пыракан ĕçе куçарма пирĕн пултарулă хĕрсемпе çамрăксем сахал мар. Вĕсене колхозсене ертсе пыма хăюллăнрах лартсан, ĕçлеме вĕрентсе, пулăшса пырсан, вĕсем кĕске вăхăт хушшинчех колхоз производствине тĕплĕн пĕлекен чăн-чăн хуçасем пулса тăрĕç.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 25-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Сталинград хули районĕнче, противник хирĕç тăнине сирсе пырса, малтанхи еннеллех наступлени туса пынă.

Пирĕн войскăсем **Рычковский, Новомаксимовский, Старомаксимовский** ятлă чугунçул станцийĕсене тата **Малонабатовский, Бирючков, Родионов, Большая Донщинка, Малая Донщинка** ятлă халăх пурăнакан пунктсене тытса илнĕ.

* * *

Ноябрĕн 24-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 30 танкне тата тĕрлĕ грузсем тиенĕ 150 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă, пĕр поезда çĕмĕрнĕ, артиллерин 5 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине икĕ рота таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград хулин заводсем вырнаçнă пайĕнче пирĕн войскăсем активлăн çапăçса темиçе дзота тата тĕреклетнĕ темиçе опорнăй пункта нимĕçсенчен тасатнă. Тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳсет. Пĕр участокра кăна нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 300 вилли ытла выртнине шутласа кăларнă. Тăшманăн 6 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ, артиллерин 3 батарейине тата минометсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем наступлениллĕ операцисем туса пынă. Н-ски танковăй соединени, малалла куçса пырса, нимĕçсенчен 20 оруди, 270 автомашина, 30 мотоцикл, 30 понтон, самолетсем тиенĕ 4 платформăна, лашасем тиенĕ поезда тата икĕ продовольстви складне тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче противникăн виллисене тата аманнă салтакĕсемпе офицерĕсем нумай выртса юлнă. Нумай çынна тыткăна илнĕ. Уйрăм участоксенче нимĕçсен фашистла войскисем, хирти укрепленисемпе усă курса, пирĕн наступлени тăвакан чаçсене хирĕç тăраççĕ, контратакăсем тăваççĕ. Совет войскисен ударнăй отрячĕсем противник хирĕç тăнине çĕмĕреççĕ, унăн атакисене сирсе-сирсе яраççĕ, гитлеровецсене пысăк çухатусем тӳстереççĕ

* * *

Сталинградран кăнтăралларахра пирĕн войскăсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Противникăн пехотипе танкĕсем пирĕн войскăсен çапăçу йĕркисене татма хăтланнă. Совет войскисем гитлеровецсен ултă атакине сирсе пăрахнă та тăшмана малтанхи позицисем патне хăваласа янă. Çав çапăçусенче противник çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питех те пысăк çухатусем тӳснĕ. Пирĕн штурмовой авиаци нимĕç войскисен çапăçу йĕркисем çине тăтăшах бомбăсем пăрахса çӳренĕ. Сывлăшри çапăçусенче противникăн 9 самолетне персе ӳкернĕ. Унсăр пуçне «Юнкерс-52» йышши виçĕ моторлă транспортнăй 15 самолета персе ӳкернĕ.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Н-ски часть противникăн виçĕ атакине сирсе ярса унăн окопĕсене тытса илнĕ. Нимĕçсен 2 танкне тата 5 автомашинине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Нимĕçсенчен тытса илнĕ окопсенче гитлеровецсен виллисене 150 вилĕ таран шутласа кăларнă. Пирĕн артиллерипе минометсенчен персе, тăшманăн пехотине икĕ рота таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре совет войскисем вырăнти çапăçусем туса пынă. Пĕр участокра Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсен оборони ăшне çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та противникăн 13 дзотне йышăнса илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 6 танкне персе ӳкернĕ, 2 самолетне персе сиенленĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем оккупациленĕ районсенче кĕрешекен партизансен отрячĕсем тăшманăн çыхăнăвĕсене пыра-пыра çапнă. Ноябрĕн 18-мĕшĕпе 21-мĕшĕ хушшинче вĕсем противникăн 100 поездне ытла ӳпĕнтерсе янă. 71 паровоз, 1.500 таран вагонсемпе платформăсем тата цистернăсем çĕмĕрĕлнĕ. Кунсăр пуçне, партизансен отрячĕсем чугунçулпа грунт çулĕсем çинчи 40 кĕпере сирпĕнтерсе янă тата противникăн 2 самолетне персе ӳкернĕ.

Нимĕçсен тискерленсе кайнă фашистла ирсĕрĕсем хăйсем тытса илнĕ совет районĕсенчи халăха пĕтерсе пыраççĕ. Каменец-Подольск облаçĕнчи Старая Ушицăра гитлерла бандитсем 700 çынна персе вĕлернĕ. Партизансем нимĕç коменданчĕн çав юнлă ĕç çинчен çар влаçĕсене çырса пĕлтернĕ хутне тытса илнĕ. Çынвĕлерен палач хăйĕн пуçлăхне çапла çырса пĕлтернĕ: «Пурĕ 700 çынна персе вĕлернĕ, вĕсене усă курма юрăхлă мар çынсем тесе персе вĕлернĕ». Пурне ăнланмалла чĕлхепе каласан, çакă вăл фашистла ирсĕрсем ĕçлеме пултарайман стариксемпе хĕрарăмсене тата ачасене персе вĕлернине пĕлтерет.

Ноябрĕн 26-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Сталинград** хули районĕнче, противник хирĕç тăнине сирсе пырса, малтанхи еннеллех наступлени туса пынă.

* * *

Сталинград хулин çурçĕр пайĕнче Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсене тактика енчен паха пулса тăракан пĕр высота çинчен хăваласа янă. Нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ, 2 танкне, артиллери батарейине тата 8 пулеметне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем çĕрлехи çапăçу хыççăн малалла куçса нимĕçсен темиçе укрепленине тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла куçса пынă. Пĕр участокра совет чаçĕсем нимĕçсен персе çĕмĕрнĕ 157 танкне тытса илнĕ, нимĕçсем вĕсене çĕре чавса лартса вĕсемпе огневой точкăсем вырăнне усă курнă пулнă. Çав участокрах 10 оруди, темиçе пин снаряд тата ытти тĕрлĕ трофейăсем тытса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем, гитлеровецсем хирĕç тăнине сирсе ярса, халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ тата 29 оруди, 3 танк, боеприпассен складне, япаласен 2 складне тата 37 автомашина тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 500 вилли таран выртса юлнă.

* * *

Сталинградран кăнтăралларахра пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çав çапăçусенче нимĕçсен пехотине пĕр полк таран пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллеристсем артиллерин 16 батарейине тата минометсен 9 батарейине пусарса лартнă тата противникăн 31 дзотне çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем малалла куçса пырса 200 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, 12 пулемет тата минометсен пĕр батарейине тытса илнĕ.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре вырăнти çапăçусем пулса пынă. Н-ски чаçăн артиллерисчĕсем тăшманăн темиçе дзочĕпе блиндажне ишĕлтернĕ тата 100 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Н-ски чаçăн боецĕсем çĕрле атака тунă та нимĕçсен пехотине пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă. Пирĕн разведчиксен отрячĕ тăшманăн тылĕнче кĕрешсе 80 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фрончĕн пĕр участокĕнче пирĕн чаçсем противникăн опорнăй пунктне йышăнса илнĕ. 10 оруди, 16 миномет, 58 автомат, 170 винтовка, 3 танк, 150 пин патрон, 5 пине яхăн снаряд, 10 пин ручной гранатăпа минăсем, 7 радиостанци, 70 километр тăршшĕ телефон кабелĕ тата ытти тĕрлĕ трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Харьков облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ противникăн гарнизонне тапăннă. 200 нимĕç салтакĕпе офицерĕ таран пухăннă çурта сирпĕнтерсе янă. Кунсăр пуçне вĕсем халăх пурăнакан пунктăн урамĕсенче тата 11 гитлеровеца вĕлернĕ. Çав отрядах противникăн çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Крушени пирки 15 танк, 7 автомашина тата ытти тĕрлĕ грузсем тиенĕ 27 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Украинăра кĕрешекен тепĕр отрядри партизансем 76 гитлеровеца вĕлернĕ тата противникăн пĕр самолетне пăшалсемпе, пулеметсемпе персе ӳкернĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Витебск облаçĕнчи Островляны ялĕнчи мĕнпур çынсене тенĕ пекех вĕлерсе пĕтернĕ. Гитлерла палачсем çав ялти 80 çынна персе вĕлернĕ. Çавăн пекех тискеррĕн хăтланнă хыççăн нимĕç влаçĕсем приказ кăларнă, унта вĕсем çапла каланă: «Островляны ялне нимĕçсен мероприятийĕсене саботаж тунăшăн наказани панă», тенĕ. Храповичи ялĕнче гитлерла бандитсем 65 çулхи хресчене Василий Давыдова нумайччен асаплантарнă. Вĕсем унтан партизансем ăçта тăнине тата вĕсене кам пулăшнине пĕлесшĕн пулнă. Старик вĕсем мăшкăлланине тата асаплантарнине чăтса тăрса пĕр сăмах та чĕнмен. Вара нимĕç офицерĕ Давыдова персе вĕлерме хушнă. Хăйне персе вĕлерес умĕн совет патриочĕ çапла кăшкăрса янă: «Пурне те вĕлерее пĕтереймĕр. Нимĕç оккупанчĕсене—вилĕм!», тенĕ.

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле чăваш халăхĕн ывăлĕсем те хăйсен пурнăçне шеллемесĕр паттăррăн çапăçаççĕ. Тăван чăваш çĕршывне, пирĕн ирĕклĕхпе телейлĕ пурнăçа сыхласа хăварассишĕн кĕрешсе, вĕсем нимĕç захватчикĕсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ.

Чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕ, фронтри чаплă снайпер РОДИОН НИКОНОВИЧ ДАВЫДОВ пĕтĕмпе 355 нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Нумаях пулмасть виçĕ кун хушши пынă çапăçусенче вăл 105 нимĕçе вĕлернĕ.

Давыдов юлташ хăйĕн çырăвĕнче çапла çырать:

«Эпĕ мĕн чухлĕ нимĕçсене ытларах вĕлеретĕп, çавăн чухлĕ манăн чĕре савăнать... Паян каллех эпĕ темиçе нимĕçе вĕлеретĕп, эпĕ вĕсене ыран та вĕлеретĕп, ырантан тепĕр кунне те вĕлеретĕп; манăн куçсем курнă чухне, алсем винтовка тытнă чухне эпĕ вĕсене кашни кунах вĕлерĕп...

Хаклă землякăм! Сире ăнăçусем тума пĕтĕм чĕререн сунатăп. Фронта ытларах пулăшăр, эпир вара, чăваш халăхĕн ывăлĕсем, тăван çĕршывшăн çапăçнă чухне чăвашăн хисеплĕ ятне вараламăпăр!»

Давыдов юлташ çамрăк боецсене хăй пек тĕл пеме вĕрентет, вăл нумай снайперсем хатĕрленĕ.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Правительство Давыдов юлташа Ленин орденĕ тата «За боевые заслуги» медаль парса наградăланă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Р. Н. Давыдов юлташ.

Д. ФАВИЛОВИЧ фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Шупашкарти электростанцие иккĕмĕш преми пама йышăннă

РСФСР Наркомхозĕ, коммунальнăй предприятисен рабочийĕсемпе хулари электротранспорт работникĕсен профессиллĕ союзĕсен Центральный Комитечĕсем коммунальнăй предприятисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулхи октябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

РСФСР Коммунальнăй хуçалăх Халăх Комиссариачĕпе асăннă профсоюзсен Центральный Комитечĕсем Шупашкарти электростанцие иккĕмĕш преми пама йышăннă.

Хĕрлĕ Çара тата вăйлăрах пулăшăр

Совет войскисем Сталинград районĕнче ăнăçлăн наступлени туса пыни çинчен Совет Информаци Бюровĕн юлашки сехетри пĕлтерĕвĕсене радио тăрăх илтсенех Шупашкарти предприятисемпе учрежденисенче савăнăçлă митингсемпе пухусем пулса иртрĕç. Н-ски заводра çавăн пек митингсене кашни цехрах, кашни сменăрах ирттернĕ. Большевикла сăмахăн мастерĕсем-агитаторсемпе вулавçăсем унта Сталинграда хӳтĕлекенсен паттăр ĕçĕсем çинчен каласа панă.

Хĕрлĕ Çар чаçĕсем малалла ăнăçлă наступлени туса пыни нимĕçсен фашистла войскисене пысăк çухатусем кӳни заводри рабочисен чĕрине савăнăçпа тултарать, тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн татах та пархатарлăрах ĕçлеме хавхалантарать.

— Сталин ячĕпе хисепленекен хула патĕнче гитлерла йыткĕтĕвĕ хытах арканчĕ. Халĕ вăл, Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе, вилĕм шăтăкĕ патнелле сывăхарса пырать. Çав çул кĕскерех пултăр тесен, пирĕн хамăрăн Хĕрлĕ Çара тата сыпписĕр хĕçпăшал парса тăрас пулать, — тенĕ пĕр цехри митингра мастер Ватурина юлташ.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем çине ответлесе, заводри рабочисемпе работницăсем ĕç тухăçлăхне ӳстерме, продукци пахалăхне лайăхлатма пулчĕç. Рабочи Каракулов юлташ, нормăна халиччен 150 процент тултараканскер, малашне 180 процент тултарма пулчĕ. Ытти рабочисем те татăклă обязательствăсем илеççĕ.

Медаленосецсен ĕçри опычĕпе паллашаççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă вăрман промышленность работникĕсем хушшинче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз бригадирĕ И. В. Ермолаев, «Красное Сормово» колхоз членĕ В. И. Николаев пур.

Вĕсем иккĕшĕ те пĕлтĕрхи сезонра Хĕрлĕ Чутайри механизациленĕ вăрман пунктĕнче чугунçул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçленĕ. Ермолаев юлташ вăрман касакан бригадăна ертсе пынă, Николаев юлташ лучковăй пăчкăпа вăрман каснă. Ĕçре стахановла пысăк тухăçлăх кăтартнăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн 1942 çулти ноябрĕн 15-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх вĕсене «За трудовое отличие» медальпе наградăланă.

Кăçалхи çулла Ермолаев юлташ колхозра бригадир пулса ĕçленĕ. Вăл халĕ каллех вăрмана ĕçлеме пырать. Партипе правительство награди çине ответлесе, вăрманта пĕтĕм вăя, пултарулăха хурса ĕçлеме пулать.

Николаев юлташ, отечественнăй вăрçă фронтĕнчен аманса таврăннăскер, çак кунсенче вăрманта ĕçлекенсем патĕнче пулнă. Вăл вутă касакансемпе турттаракансене фронтри хыпарсем çинчен каласа панă, хăйĕн ĕçри стахановла мелĕсемпе паллаштарнă.

Заводсенчи рабочисем валли

ÇĔРПУ. Тутарла-Кăнаш ялсоветĕнчи «Сталинцы» колхоз членĕсем заводсенчи рабочисем валли государство хакĕпе сутма 6,5 центнер çĕрулми, 260 килограмм купăста, 95 килограмм пăрçа, 25 килограмм сухан пухрĕç.

З. КАРПОВА.

Авăн çапса пĕтермелли çирĕмкунлăх

Авăн çапакансем патĕнче

КАНАШ, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем районри ĕçсыннисене ĕçре çĕнĕ çĕкленӳ кӳчĕç. Çак кунсенче авăн çапас ĕçре юлса пыракан колхозсем лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç. Сиккасси ялсоветĕнчи Шмидт ячĕпе тăракан колхоз авăна тăпачăсемпе çапнисĕр пуçне лашапа ĕçлекен икĕ молотилкăпа çапма тытăнчĕ. Молотилкăсем пĕр чарăнмасăр, йĕркеллĕ ĕçлеççĕ, кунне 20-шер тонна ытла тырă çапаççĕ. Авăн çапнă çĕрте А. Суранова, М. Матросова, В. Сорокина колхозницăсем ĕçĕн лайăх тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ.

Уроксем пĕтнĕ хыççăн учитель И. Васильев тата учительницăсем С. Суранова, Ю. Мурзукова юлташсем çĕнĕ хаçатсем илсе итем çине тухаççĕ. Колхозниксем вĕсене пысăк хаваслăхпа кĕтсе илеççĕ. Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернинчен савăнăçлă çĕнĕ хыпар илтеççĕ.

— Сталинград хулине пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларас сехет инçе юлмарĕ, — теççĕ вĕсем, — пирĕн хамăрăн мухтавлă воинсене пĕтĕм вăйран пулăшмалла.

Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе чунчĕререн туйса тăрса, районри колхозниксем çак кунсенче нихăçан пулман çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăхра — декабрĕн 1-мĕшĕччен авăн çапса пĕтерессишĕн, государство умĕнчи парăмсене татассишĕн вĕсем пĕтĕм вăя хурса кĕрешеççĕ. Районри колхозсен юлашки вунăкунлăхра график тăрăх 1.400 гектар тыррине çапса пуçтармалла пулнă, вĕсем 1.483 гектар тыррине çапса кĕртнĕ.

Ноябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне районри 15 колхоз государство умĕнчи парăмсене татнă. Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсемпе хавхаланса, Мăкăрти М. Горький ячĕпе тăракан, Ахпӳртри «Красный путиловец» тата ытти колхозсем кулленех 30—40-шер лавпа хатĕрлев пункчĕсене тырă леçеççĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

Ĕçри хастарлăх ӳсрĕ

ЕТĔРНЕ, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Пирĕн чаçсем нимĕç войскисене хирĕç Сталинград хули районĕнче пуçласа янă наступлени ăнăçлăн малалла пулса пыни çинчен Совет Информаци Бюровĕн юлашки пĕлтерĕвĕсене вуланă хыççăн районри ĕçсыннисен ĕçлес хастарлăхĕ ӳсрĕ. Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсем çинчен пĕлтерекен хыпарсем кашни колхозникпа колхозницăна çĕнĕ вăй-хăват парса хавхалантараççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем, фронтовой çирĕмкунлăхра авăн çапса пĕтерес тата государство умĕнчи парăмсене татас тесе, кунĕн-çĕрĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

ВКП(б) райкомĕн агитаципе пропаганда отделĕн заведующийĕ Шмелев юлташ Стрелецкри Буденный ячĕпе тăракан колхоза пынă. Вăл авăн çапакансем патне тухса Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа панă. Кун хыççăн колхозниксем авăна кунĕн-çĕрĕн çапма йышăннă. Çав çĕр пĕри те киле кĕмен.

Кĕçĕн Хăмарккари «Родина» колхоз членĕсем юлашки икĕ кун хушшинче 10 гектар тыррине çапса пуçтарчĕç, график тăрăх 7 гектар тыррине çапса пуçтармалла пулнă. Çак колхозри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем авăн çапас тĕлĕшпе ĕçлекен фронтовой смена организациленĕ. Ăна комсомол организацин секретарĕ Осипова юлташ ертсе пырать. Колхозницăсем А. Анисимова, Ф. Баранова, М. Кузнецова тата ытти юлташсем авăн çапнă çĕрте ĕç нормине 150—200 процент тултараççĕ. Колхоз ĕнер авăн çапса пĕтернĕ. Комсомолецсемпе çамрăксем кун хыççăн ялхуçалăх машинисемпе инвентарьсене пĕр çĕре пухса тирпейлесе лартрĕç.

И. ЛЬВОВ.

Уйĕç бригадирĕсен курсĕ

Вăрнар районĕнче уйĕç бригадирĕсене хатĕрлеме икĕ эрнелĕх курс организациленĕ. Курса вăйлă тырпулшăн кĕрешнĕ çĕрте лайăх тĕслĕхсем кăтартнă, 7 çулран кая мар вĕреннĕ 60 çамрăка, пуринчен ытларах хĕрсене, пухаççĕ. Курсра вĕренекенсене ВКП(б) райкомĕн секретарĕ ялхуçалăх ĕçĕн специалисчĕсемпе пĕрле суйласа илет. Занятисем иртернĕ çĕрте ВКП(б) райкомĕн секретарĕ С. Коротков, профессор Пельцих тата агрономсем Е. Ерлакова, И. Данилов, П. Лукин юлташсем хутшăнаççĕ.

Курсра çĕр ĕçлесси, удобренисем тата вĕсем тырпул тухăçне ӳстерме мĕнле пулăшни, вăрлăхсем, ака срокĕсемпе акмалли майсем, хăш майпа аксан тырпул тухăçлăрах пулни, акмалли нормăна ӳстерни, начар çитĕнекен кĕрхи тырăсем çине ир çитĕнекен çурхи тырăсем акасси, яровизацине тĕрĕс тăвасси тата вăл тырпул тухăçлăхне ӳстерме пулăшни, пусуçаварăнăшĕ (севооборот), ӳсен-тăрансен пурнăçĕ тата калчасене пăхса çитĕнтересси, колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси, ĕç нормисем тата ĕçе тĕрĕс шута илесси, çурхи ĕçсене тĕрĕс организацилесси, колхозри тата бригадăри дисциплина, ялхуçалăх машинисемпе инвентарьсем, — çак темăсемпе теори тĕлĕшĕнчен вĕрентеççĕ тата практикăллă хăнăхусем параççĕ.

КОММУНИСТ ЕРТСЕ ПЫРАКАН КОЛХОЗРА

КАЛИНИНО. Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташăн докладне Чулкаçри «Смычка» колхоз (председателĕ коммунист П. Ландышев юлташ) членĕсем пысăк çĕкленӳпе сӳтсе-яврĕç. Сулпуçăн докладне ответлесе, вĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлеме, фронта ытларах та ытларах пулăшса тăма пулчĕç. Колхоз çак кунсенче государство умĕнчи парăмсене 100 процентчĕпех парса татрĕ, 1942 çулшăн ашкакай памалли плана 120 процент, сĕтсу памалли плана 150 проц. пурнăçларĕ.

Колхозниксем кĕске вăхăт хушшинче танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума 3.000 тенкĕ, партизансем валли парнесем яма 1.000 тенкĕ укçа пухрĕç; заводсенче ĕçлекен рабочисене 6 центнер çĕрулми, 20 килограмм сухан, 85 килограмм сысна какайĕ государство хакĕпе сутрĕç. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 13 мăшăр çăматă, 9 кĕпе, перчаткăсем тата ытти ăшă япаласем чылай пухса пачĕç. **Г. МАТВЕЕВ.**

Фронтовиксен ачисемшĕн тăрăшса

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Хутар ялсовечĕн исполкомĕ фронтовиксен çемьисене куллен пулăшса тăрать.

Фронтовиксен ачисене пулăшас тĕлĕшпе ялсовет исполкомĕ çумĕнче ятарласа комитет организациленĕ. Вăл кĕске вăхăт хушшинчех колхозсенчен фронтовик ачисем валли 34 центнер тырă, 5 тонна çĕрулми, 20 центнер купăста, 6 центнер кишĕр т. ыт. ялхуçалăх продукчĕсем туянчĕ. Вăтам шкулта 80 ача валли вĕри апат пĕçереççĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

ИЕПРЕÇ, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем сахал мар хатĕрлесе панă. Паянхи куна районĕпе 978 тир, 28 кĕрĕк пиншак, 29 фуфайкăпа ăшă брюкисем, 100 мăшăр ăшă кĕпейĕм, 81 мулаххай, 75 мăшăр çăм алшишь, 205 килограмм çăм тата ытти ăшă япаласем те чылай пухнă.

Анчах ку çителĕксĕр-ха. Районри хăшпĕр учрежденисемпе предприятисенче тата колхозсенче ăшă тумтирсем пухакан комиссисем начар ĕçлеççĕ. Ноябрĕн 10-мĕшĕ хыççăн Крупская ячĕпе тăракан, «Красный Октябрь», «Путиловец», «Красный урожай», «Çĕнĕ пурнăç», «11 лет Чувашии» колхозсенчи тата Бунскри вăрман пунктĕнчи комиссисем пĕр япала та пухман.

Хăшпĕр колхозсемпе учрежденисем ку ĕçе ячĕшĕн çеç тума пăхаççĕ. Йĕпреç колхозĕнче (колхоз председателĕ Иванов) пурĕ те 8 килограмм çăм, 10 тир, пĕр мулаххай çеç пухнă.

Д. МИХАЙЛОВ.

Пирĕн воинсен паттăрлăхĕ лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать

КУКЕÇ. Шăмăршри Водопьянов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ Андрей Петрович Петров юлташа ялçыннисем, колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар ретне, фронта ăсатнă. Тухса каяс кун Петров килне колхозниксем алă парса сывпуллашма кĕрсе кĕре тухнă. Вĕсем хăйсен председательне Хĕрлĕ Çар ретĕнче те сыхлăхлă пулса паха ĕçсем тума ырă суннă, колхоз ĕçне малашне те çирĕплетсе пыма, вăйлă тырпулшăн кĕрешсе фронта пулăшса тăма сăмах панă.

Нумаях пулмасть колхоз правленийĕ А. П. Петров боец пулса кĕрешекен Хĕрлĕ Çарăн Н-ски чаçĕн командованийĕнчен çыру илчĕ. Çырура вĕсем боец Петров нимĕç фашисчĕсене хирĕç пыракан вăрçăра паттăрлăхпа хăюлăх кăтартни çинчен çыраççĕ.

«Вăл икĕ хутчен тăшман ункинче пулнă. Икĕ хутчен те тăшман ункинчен паттăррăн çапăçса тухрĕ. Халь каллех стройра, малтанхи пекех тăшманпа хаярррăн çапăçать. Вăл пирĕн чаçре примерлă боец, эпир унпа тивĕçлипе мухтанатпăр. Халь боец Петров ефрейтор званине илчĕ», тенĕ çырура.

Капитанпа политрук колхозниксене Петров фронтра паттăррăн çапăçнă пек ĕçлеме чĕнеççĕ; кашни килограмм тырăшăн, пахча-çимĕçшĕн кĕрешме, фронта валли ытларах та ытларах апат-çимĕç туса пама чĕнеççĕ.

Ку çырăва колхозниксене пĕрлешӳллĕ пухура вуласа пачĕç. Колхозниксем хăйсен малтанхи руководителĕ фашистсене хирĕç пыракан çапăçура паттăрлăхпа хăюлăх кăтартса пынăшăн савăнчĕç. Часть командованийĕ патне ялхуçалăхĕнчи ĕçсене вĕçленĕ хыççăн ответлă çыру çырма йышăнчĕç. Çак пухурах колхозниксем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 8.000 тенкĕ укçа пухса пачĕç.

Сăмах тӳрех ĕçе кусрĕ. Пуху хыççăнах колхозниксем итем çине авăн çапма тухрĕç. Авăна куллен çурçĕр иртни икĕ сехетре тухса мĕн тĕттĕм пуличчен çапма тытăнчĕç. Çапла ĕçлесе тепĕр икĕ кунран вĕсем тырпулсене пĕтĕмпех çапса пуçтарчĕç, тепĕр икĕ кунран государствăна тырă, çĕрулми, пахча-çимĕç парса татрĕç. Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем хатĕрлес ĕçе вăйлатрĕç.

Октябрь уявĕ хыççăн вара колхозниксем Хĕрлĕ Çарăн Н-ски чаçĕн командованийĕ патне ответлă çыру ячĕç.

«Пирĕн колхозăн председателĕ пулса ĕçленĕ Петров юлташ нимĕç ирсĕрĕсене хирĕç паттăррăн çапăçнипе эпир мухтанатпăр. Хĕрлĕ Çар воинĕсен паттăрлăхĕ пире тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать. Пирĕн хушăра ĕçкунĕсен минимумне тултарман пĕр колхозник та çук», — пĕлтереççĕ колхозниксем.

Малалла вĕсем колхоз, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе, кăçал ялхуçалăхĕнчи пур ĕçсене те иртнĕ çулхинчен маларах тата пахарах туса ирттерни çинчен, колхозниксем фронта мĕн кирлине пурне те туса парассишĕн малашне те ырми-канми ĕçлеме хатĕр тăни çинчен çырчĕç.

Т. ЛОГИНОВ.

Танксен колоннисене тума

КАНАШ. Вăтакас Татмăшри туллимар вăтам шкулти учительсем уроксем пуçланас умĕн классенче эрнере икĕ хут политинформацисем туса ирттереççĕ. Нумаях пулмасть пĕр политинформаци вăхăтĕнче танксен «Народный учитель» ятлă колоннине тума укçа пухасси çинчен каласнă. Кун хыççăн çак ĕç валли укçа пухас ĕç пуçланнă. Чи малтанах учительсем хăйсем хушшинче 300 тенкĕ пухнă. Шкул директорĕ Викторова юлташ — 50 тенкĕ, Седова юлташ — 50 тенкĕ, Григорьев, Михайлова, Фомина, Антонова юлташсем 30—40-шер тенкĕ панă. Учительсен паха примерне йышăнса илсе ачасем те çак ĕç валли 1.050 тенкĕ пухнă. 2-мĕш класра вĕренекенсем Миша Терентьев 24 тенкĕ, Энох Васильев 20 тенкĕ, Миша Петров 15 тенкĕ панă.

Т. ТУРХАН.

* * *

ШĂХАСАН. Районри ĕçсыннисем танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» ятлă колоннисене тума укçа-тенкĕ пухас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 229.402 тенкĕ, танксен «Тракторист Чувашии» ятлă колоннине тума 44.317 тенкĕ хывнă.

Тельман ячĕпе тăракан колхоз членĕсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 10.790 тенкĕ панă. Çавăн пекех Шуркассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан, Çĕнĕ Пинерти «Пинер», «Свобода» колхозсен членĕсем те çак ĕç валли 10—8-шер пин тенкĕ ытла пухнă.

Танксен колоннине тума шкул ачисем те укçа пухаççĕ. Шуркассинчи вăтам шкулта вĕренекенсем 1.450 тенкĕ, Матьшӳри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем 600 тенкĕ ытла пухнă.

В. ЯКОВЛЕВ.

* * *

Вăрнарти зоотехникăпа ветеринари техникумĕнче вĕренекенсем танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума 2.500 тенкĕ укçа пухрĕç.

Н КОШКИН.

Всевобуч пунктĕнче

Шăхасанта всевобучăн вĕренӳ пунктĕнчи боецсем, çар ĕçĕпе хăнăхусем илсе, тăшманпа паттăррăн çапăçакан чăн-чăн боец пулма вĕренеççĕ. Вĕсем çар ĕçне вĕреннипе пĕрлех хăйсен укçи-тенкипе те фронта пулăшаççĕ. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума укçа-тенкĕ пухмашкăн чĕнсе каланине сӳтсе-явнă хыççăн çак ĕç валли пĕр сехет хушшинчех 500 тенкĕ пухрĕç. Боецсем А. Павлов, А. Почтарев юлташсем танксен колоннине тума 25-шер тенкĕ пачĕç. Кунсăр пуçне, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 9 тир, 11 килограмм çăм, 10 алшăлли, 9 мăшăр алшиш, 12 мулаххай тата ытти япаласем те пухса панă. Фронтовиксен çемьисене куллен пулăшса тăраççĕ. Вĕренӳре малта пыракан 35 боец комсомол ретне кĕнĕ, халĕ татах 39 боец Осоавиахим организацин членне кĕме заявлени панă.

А. ОРЛОВ.

Чăваш художникĕсен картинисен выставкинче

Выставкăра 60 картина ытла. Вĕсенчен чылайĕшĕ отечественнăй аслă вăрçă тата ĕçсыннисем фронта пулăшни çинчен.

Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Н. К. Сверчковăн «Чăваш комсомолĕ» ятлă бронепоезда фронта ăсатни», И. М. Рубановăн «Пионерсем суранланнă боецсем патĕнче», Н. Волковăн «Çынвĕлеренсем» ятлă картинисене кашниех кăмăлласа пăхать.

РСФСР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ М. Спиридонов юлташ Осипов орденоносецăн тата кĕçĕн сержант Лиза Сергеевăн портречĕсене пысăк пултарулăхпа ӳкернĕ.

В. Д. Вороновăн «В. И. Ленин Хусан университетĕнче» ятлă картини кăмăла каять. Ăна чăваш художникĕсен творчествинче этемлĕх генийĕн çамрăк чухнехи пурнăçне кăтартакан пуçламĕш картина теме те юрать, мĕншĕн тесен Ленинăн çамрăклăхри пурнăçне пирĕн художниксем халиччен çакăн пек уçăмлăн кăтартса парайман-ха.

Ю. А. Зайцев художникăн пейзажĕсем питех те кăмăллă. Пуринчен ытла «Алма-Ата таврашĕнчи çурхи кун» ятли килĕшӳллĕ. Художник сăрăпа пĕлсе усă курнине унăн кашни картининчех курма пулать.

Скульптурăсенчен Мотовиловăн «Чăвашсем отечественнăй аслă вăрçăра» ятлă скульптура аван. Рождественская юлташăн скульптурисем те мухтава тивĕçлĕ. Г. А. Ечеистовăн акварелĕсенчен пуринчен ытла «Судоверфь» текенни аванрах.

Выставкăра «пиçсе çитеймен» картинăсем те пур. Юрий Зайцевăн «Атăл çинче» ятлă картини шухăш-кăмăл енчен питех те ырă, анчах ăна ӳкерсе пĕтерейменни картинăн пахалăхне чылай чакарнă. Н. Моховăн «Çĕнтерсе таврăн» ятлă анлă шухăшлă картини те, ӳкерсе пĕтермен пирки, ĕçсыннисен чĕрийĕ патне çитеймест. Рубановăн «Пионерсем суранланнă боецсем патĕнче» картини тема енчен паха, анчах ӳкерчĕкре сутă енчен çитменлĕхсем пур. Тулти сутă та, пӳлĕмри те—пĕр майлах, сывлăш перспективи пачах сисĕнмест. М. Спиридоновăн «Фашистсене шыв урлă каçнă çĕрте аркатни» ятлă картининче вăрçă обстановки сахал сисĕнет.

Выставка, паллах, чăваш художникĕсен творчестви ӳснине уççăн кăтартса парать. Анчах кунпа пĕрлех вăл пирĕн художниксемпе скульпторсем хальхи лару-тăруран, отечественнăй аслă вăрçă палăртакан сюжетсенчен аякрарах тăнине кăтартать. Пирĕн чăваш художникĕсен творчествинче хамăр земляксен, чăваш халăхĕ пăхса çитĕнтернĕ Совет Союз Геройĕсен мухтавлă ĕçĕсене курас килет. Совет Союзĕн Геройĕ капитан Орлов хăй çинчен «Чăваш Коммуни» хаçатра çырнă статьяра художниксем валли мĕнчухлĕ сюжет?

Чăваш халăхĕ вырăс халăхĕпе пĕрле нимĕç захватчикĕсене хирĕç ĕлĕкренпех кĕрешнĕ. Александр Невскин шăлнĕ князь Андрей 1242 çулта нимĕç рыцарĕсемпе çапăçма чăваш çĕршывне çар пухма килнĕ текен легенда çӳрет. Çакă хумхантаракан, патриотла туйăма çĕклекен сюжета пирĕн художниксем мĕншĕн ку таранччен манăçа хăвараççĕ-ха?

Е тата чăваш ялне илер. Унта 10—12 çулхи çамрăксенчен пуçласа 60—70 çулхи стариксем таранах колхозра мĕнпур вăя хурса, ырми-канми ĕçлеççĕ, фронта пулăшаççĕ. Пирĕн колхозсенчи, МТС-сенчи, предприятисемпе шкулсенчи çамрăксем—кашни харпăрхăй вырăнĕнче çĕнтерӳ тумалли хĕçпăшала туптаççĕ. Вăтам шкул пĕтернĕ хĕрача хăюллăнах тракторпа комбайн рульне тытнă, хĕрарăм капан тăвать т. ыт. те. Пĕр сăмахпа каласан мĕнчухлĕ тема, мĕнчухлĕ сюжет?

Тата çакна палăртмалла: выставкăра юнлă Гитлерăн урнă йыткĕтĕвĕсен тискер сăн-сăпатне кăтартакан картина пĕрре çеç. Совет Информаци Бюровĕ кунсерен тенĕ пекех нимĕç захватчикĕсен вăрă-хурахла тискер ĕçĕсем çинчен пĕлтерет. Çав хыпарсене радио тăрăх итлесен, хаçатсем çинче вуласан, ĕçсыннийĕсен чĕрийĕсем тăшмана курайманлăхпа тулса çитеççĕ. Пирĕн художниксем гитлерла мерзавецсен тискер те хăрушă ĕçĕсем çинчен витĕмлĕ картинăсем çыраймарĕç-ха.

Чăвашсем Карело-Финн ССР республикине куçса кайнă. Вĕсенчен чылайăшĕ халĕ партизансен отрячĕсенче нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешеççĕ. Çакнашкал сюжетлă картинăсем халăх тискер тăшмана курайманнине вăйлатаççĕ. Анчах чăваш художникĕсем ку темăпа та картинăсем ӳкермен-ха.

Чăваш художникĕсен выставкăри картинисен хисепне асăннă темăсем тăрăх ӳкернĕ картинăсемпе ӳстермелле.

М. К.

Ют çĕршывсенче

Тегеранри совет выставки питĕ ăнăçлăн иртет

ТЕГЕРАН, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 7-мĕшĕнче «СССР 25 çул хушшинче» ятлă выставка уçăлнă. Вăл питĕ ăнăçлăн иртет. Ăна куллен 2—3 пин çын пырса курать. Выставка çинчен çырса хăвармалли кĕнекере отзывсем питĕ нумай, выставкăна пынă çынсем унта хăйсем Совет Союзне чунтан-чĕререн кăмăллани çинчен каласа параççĕ. Хăшпĕр шкулсемпе промышленноçть предприятийĕсем çав выставкăна массăллă экскурсисем яраççĕ. Икĕ эрне хушшинче вăл выставкăна 40 пин çын ытла пырса курнă ĕнтĕ.

Ют çĕршывсенчи пичет совет выставки çинчен ăшшăн та кăмăллăн çырать.

Людмила Павличенко Лондонра

ЛОНДОН, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 22-мĕшĕнче Лондонри чи пысăк театрсенчен пĕринче паллă совет снайперне Людмила Павличенкăна хисеплесе пухнă пысăк митинг пулса иртнĕ. Повличенко питĕ нумай салам илнĕ, çав саламсенче çынсем совет хĕрарăмĕсемпе мухтанса хĕпĕртени çинчен каланă. Павличенко хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: совет халăхĕн моральлĕ вăйĕ пысăк пулни вăл вĕсем хăйсем кĕрешекен ĕç тĕрĕслĕхлĕ ĕç пулса тăнинчен килет, тенĕ.

Акăлчан хĕрарăмĕсем Павличенкăна темиçе парне панă.

Ноябрĕн 23-мĕшĕнче Людмила Павличенко çар министерствин представителĕсемпе пĕрле Кăнтăр Англири пĕр пысăках мар çар заводне кайса курнă. Ăна унта хăйĕн ятне çырнă винтовка панă.

ÇУРÇĔР АФРИКĂРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Роммелĕн Триполитани порчĕсем патне пырса тăнă войскисен хыçалта пыракан чаçĕсем çапăçаççĕ. Тĕнĕл çĕршывĕсен войскисем Эль-Агейларан 100 километртра союзниксен войскисене вăйлăн хирĕç тăнă. Роммель Нернич генералăн Тунисри войскисемпе пĕрлешме тăрăшать.

Çапла пĕлтереççĕ: тăшманăн çав группировкисене пĕрлешме парас мар тесе кĕрешекен союзниксен войскисен малалла кăшт хуллентерех куçса пыма тивнĕ, мĕншĕн тесессĕн унта тăшманăн войскисем пухăнса тăнă.

Вăтаçĕрти Тунисăн çурçĕр пайĕнче французсем противника Обейтлăпа Аль-фран хĕссе кăларнă.

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Туниспа Бизерта хушшинчи Меджерта шывĕн улăхĕ тăрăх наступлени туса пыракан союзниксен войскисем Германин çăмăл бронетанковăй чаçĕн атакине сирсе янă.

Илнĕ хыпарсем тăрăх, тĕнĕл держависен парашютисчĕсем Тунисăн хĕвелтухăç çыранне пыра-пыра анаççĕ. Француз войскисен уйрăм тăракан групписем, подкреплени пыман пирки, нимĕçсене хирĕç тăма пăрахнă.

ФРАНЦИН ХĔВЕЛАНĂÇ ПОЛУШАРИРИ ВЛАДЕНИЙĔСЕМ ПИРКИ ТУНĂ КИЛĔШУ

ЛОНДОН, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпар тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕ Хэлл: Пĕрлешӳллĕ Штатсем Мартиник утравĕн влаçĕсемпе çителĕклĕ килĕшӳ тунă, тесе пĕлтернĕ. Çав килĕшĕве тунă хыççăн Францин Караиб тинĕсĕнчи владенийĕсене Америка войскисем оккупацилесси кирлех те мар пулмалла.

Хэлл малалла çапла пĕлтернĕ: килĕшӳ Францин Хĕвеланăç полушарири пур владенийĕсене те, вăл шутра Франци Гвианине те, пырса тивет.

ФРАНЦИН ХĔВЕЛАНĂÇ АФРИКИ ПЕТЭНА ПĂХĂНМА ПĂРАХНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, адмирал Дарлан сăмах тухса каланă, ăна Алжирти радиостанци радио тăрăх сарнă. Дарлан çапла каланă: Францин Хĕвеланăç Африки хăйне хăй манăн алла пачĕ, тенĕ.

Виширен çапла пĕлтереççĕ: Петэн Францин Хĕвеланăç Африкинчи халăхпа армие хăйĕн приказĕсене пурнăçа кĕртсе пыма хушнă. Францин Хĕвеланăç Африкинчи влаçсем Петэн ыйтнине нимĕнсĕрех хăварнă пулмалла.

Францин Хĕвеланăç Африкинчи влаçсем хăйсем Дарлан енне куçни çинчен пĕлтерни вĕсем союзниксен енне куçни çинчен пĕлтернипе пĕрех, тесе шутлаççĕ Англири хаçатсем.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Францин Хĕвеланăç Африки союзниксен аллине питĕ пысăк территори, 1.800 пин квадратлă миля талкăшĕнчен те пысăкрах территори парасшăн, çав территори çинче 15 миллион çынна яхăн пурăнать. Хытă вĕçекен самолетсем Дакартан Бразилие Атлантика океанĕн кăнтăрти пайĕ урлă пĕр 6 сехет хушшинче вĕçсе çитме пултараççĕ. Дакар вăл пысăкăш енчен Францири портсем хушшинче виççĕмĕш вырăнта тăрать, вăл Марсельпе Гавртан çеç пĕчĕккĕрех. Унăн гаванĕсене чи пысăк пассажирски пароходсемпе линкорсем те кĕреççĕ.

Дакарта пĕр линкор, 3 крейсер, 3 эсминец тата темисе подводнăй лодка тăраççĕ.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ СЕН-НАЗЕРА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Америка авиацийĕ Германин Сен-Назерти подводнăй лодкăсен базине ăнăçлăн пырса тапăннă. Взрывсем нумай çĕрте пулнине палăртнă. Малтанлăха палăртнă тăрăх, Америка бомбардировщикĕсем тăшманăн 15 истребительне персе ӳкернĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ноябрĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбардировка тăвакан авиацийĕн пысăк соединенийĕсем Германин промышленность центрне Штутгарта тапăннă. Тапăнура виçĕ моторлă бомбардировщиксем пулнă. Çыран çийĕпе вĕçсе иртекен самолетсем кĕрлени пĕр сехет хушши илтĕнсе тăнă.

Англи авиацийĕн ытти соединенийĕсем Çурçĕр Францире таварлă поездсене атакăланă тата Ла-Манш çинче транспорт суднине вут тивертнĕ. Çав операцисенчен Англин 10 бомбардировщикĕ хăйсен базисене таврăнман.

Ноябрĕн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Бельгипе Çурçĕр Франци пырса тапăннă вăхăтра Англи самолечĕсем чугунçул çинчи 5 состав çине бомбăсем пăрахнă, пулеметсемпе тупăсенчен пенĕ. Çавăн пекех тата икĕ завод çине те бомбăсем пăрахнă.

БЕЛЬГИРЕ ОККУПАЦИЛЛĔ ВОЙСКĂСЕН ЙЫШĔ ЧАКНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Ирĕклĕ Бельгин агентстви çапла пĕлтерет: Бельгие нимĕçсен Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра аманнă салтакĕсене тиенĕ темиçе поезд пырса çитнĕ. Вĕсенчен ытларахăшĕсем — 18-19 çулхи çамрăксем.

Çурçĕр Африкăри кампани пуçланнă хыççăн Бельгире оккупациллĕ войскăсен йышĕ нумай чакнă. Хальхи вăхăтра çав войскăсем пуринчен ытларах иртнĕ вăрçă участникĕсенчен тăраççĕ. Çыран хĕрринчи районсенче сыхламалли мерăсене вăйлатнă.

ГИТЛЕР ИТАЛИРИ ОППОЗИЦИПЕ КĔРЕШЕТ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Пичет пĕлтернĕ тăрăх, гестапо начальникĕ Гиммлер, нумаях пулмасть Италирен таврăннăскер, Гитлера Италире вăрçă лару-тăрăвĕпе шалти лару-тăру хăрушлăхлах начарри çинчен каласа панă. Гиммлерпа канашланă хыççăн вара Италие Итали полицине пулăшма тесе 2 пин гестаповеца янă.

Çапла пĕлтереççĕ: Италин кăнтăр пайĕнче фашизма хирĕçле пĕр организацин 70 членне арестленĕ, çав шутра Умберто принцăн адъютанчĕ пулнă полковника Граноцине те арестленĕ.

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Итали влаçĕсем çĕршывăн кăнтăрти районĕнче чугунçул çыхăнăвĕ арканнă пирки хытах пăшăрханаççĕ. Октябрьпе ноябрь уйăхĕсенче Италин кăнтăрти чугунçулĕсем çинче диверсипе саботажла ĕçсем 40 ытла пулнă. Вракалеон çывăхĕнче чугунçул çинчи пĕр паха кĕпере сирпĕнтерсе янă, çавна пула çав çул тăрăх çӳресси вара 6 кунлăха чарăнса ларнă. Неапольпе Таранто хушшинчи чугунçул çинче нимĕçсемпе итальянецсен нумай офицерĕсем ларса пынă пассажирски поезд пысăк хăвăртлăхпа пынă çĕртех товарнăй поезда пырса çапăннă. Вилнисемпе аманнисем нумай шутланаççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Заводу требуются:

инженеры и техники, технологи по холодной обработке металла и нормировщики, снабженческие, складские и счетно-конторские работники, машинистки.

Требуются следующие квалифицированные рабочие: токари, револьверщики, строгальщики, фрезеровщики, автоматчики, слесаря-инструментальщики, слесаря по ремонту, слесаря по автоделу, подсобные рабочие, уборщицы, штамповщики, прессовщики, лакеры, волочильщики, долбежники, шлифовщики, электромонтеры, электрослесаря, грузчики, дворники, штукатуры, каменщики, печники, плотники, шорники-смазчики, шоферы, слаботочники, радист, прачки, курьеры.

Требуются также вахтеры (охранники) и пожарные работники.

Принимаются переквалификанты (взрослые ученики) по всем указанным выше специальностям.

Обращаться: ул. Карла Маркса, 64, в помещение Бюро пропусков от 11 до 15 час. дня.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн 3—99. ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11258

Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. За каз № 2 Ф 6. 53 84 п